Хăшпĕр учитĕлсем хăйсем тĕлĕн ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне килтех вĕренмелле, вĕсене парткабинет консультацисем организацилесе памалла.

Çапла вара, пайăнхи кун Йелчĕк районĕнче йăлти интеллигенци хушшинчи партилĕ-политикăлă ĕçе йĕркелесе ситернĕ теме çукха.

ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне кружоксенче вĕренни учитĕлсене килĕшмен йăпала. Вĕсем вĕреннĕ çынсем, парти историне хăрпăрхăй тĕллĕн вĕренме пултараççĕ.

Ку ĕçе лайăхлатас йĕнĕпе райçутĕç пайĕн, профсойуз райкомĕн тата ПСК(б)П райкомĕн учитĕлсене вăхăтра пулăшу памала.

Волкăв.
ПСК(б)П Йелчĕк райкомĕн секретарĕ.

## Консультаци пахалăхне ӳстермелле

ШĂХАСАН. Марксисăм-ленинисăм теорине коммуниссем, комсомолĕсен, интеллигентсем хăйсем тĕллĕн вĕренеççине вăйлатса. вĕсене пулăшса пырасси халĕ тĕп вырăнта пулмала. Çавна май ПСК(б)П райкомĕ ПСК(б)П историне вĕренекенсем валăн консультаци организацилерĕ. Консультантсем пулса ĕçлеме райком секретарĕсене, парткабинет пуçлăхне тата райком членĕсене уйăрна.

Консультацине кашни пуçламăш организацинчи коммуниссене партбюро пĕрле чĕнме планлать. Кунсăр пуçне консультацисене вырăнсене тухса та иртереççĕ. Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн районри уйăмĕнче, Ентрийленче консультацисем пулса иртнĕ. Малтанхи консультацисем çакна кăтартса паче:халĕ районра ПСК(б)П историне тăранăн вĕренесси начар пырат-ха. ПСК(б)П историне вĕренес ĕçре коммунисем, комсомолĕсем, учитĕлсем кружоксене заньатисене çӳренипех лăпланнă. Хăйсем тĕлĕн вулана чухне те ПСК(б)П истори учебникĕ тăрăх тĕплĕн, сине тăрса ĕçлемеççĕ. Маркс, Энгельс, Ленин, Сталин произведенисене вулакансем сахăл. Чылай коммуниссен хăйсен библиотекисем çук. Хăшпĕрисем кĕнекене ĕçлеме пĕлмеççĕ.

Консультацисем организацилех иртмерĕç. Енгрийленĕне 3 çын çеç пулнă. Учитĕлсем, комсомолĕсем пуханман.

Малала консультацисен пахалăхне ӳстермелле. Уйрăмах кĕнекепе ĕçлеме вĕрентмелле, дисциплинăна çирĕплетмелле. Парторгсен хăйсен коммунисĕсене консультацине илсе пырассишĕн ответлăха ӳстермелле.

С. Соколов.

## Харпăрхăй тĕллĕн вĕренеççĕ

Çамрăксене коммунисла воспитани парасси коммосомолăн тĕп задачă пулса тăрать. Çак задачана пурнăçа кĕртсе пырас пулсан пурнăçăн малтан комсомолĕсем хăйсем марксисăм-ленинисăм теорине вĕренни кирлĕ. ПСК(б)П историн Кĕске курсĕ тухнине комсомолĕсем пысăк сĕкленӳне кĕтсе илчĕç, унăн уйрăм сыпăкĕсене хаçатсенче пичетленĕ вăхăтрах тимлĕн вулаçа пынĕç.

ПСК(о)П Историн Кĕске курсĕ уйрăм кĕнекепе пичетленсе тухнă май, халь ăна тăранăн вĕренес ĕç пуçланнăма. Йăнмурзинăри (Трак р.) Йефремăв, Коннав, Николайĕв комсомолĕсем парти историне харпăрхăй тĕллĕн вĕренме пуçлаçĕç.Харпăрхăй тĕллĕн вĕренес ĕçе йĕркелени комсомолĕсене политикăла пĕлӳне ӳстерес тĕллĕпе тĕллĕн ĕçлеме май парать.

Иртнĕ çулсенче парти историне кружоксенче çеç вĕреннĕ пирки, вăл ĕç сигелĕксĕр пулса пыратчĕ. Паллах, уйăхра виçĕ хут икшер сехетлĕ политзаньатисем туса иртернине кирлĕ тăран вĕренсе çитме май пулман. Заньатисем те питĕ кичемĕн иртетчĕç.

Парти историне харпăрхăй тĕллĕн вĕренес ĕç пуçланнă май вулав çурчĕсен вырăнĕ те игълараx ӳсет. Вулав çурчĕсенче парти историне вĕренме кирлĕ пур литературăсем те пулмала, вĕренекен хăйне кирлĕ литературăсене вулав çуртĕнче тупса илме пултарăр.

Комсомол райкомĕн пропагандиссене кирлĕ пулăшу памала, вĕсем валăн теорилĕ докладсем ыларах туса иртермелле.

А. Киçеļов.

## Актива куллен ĕçлемелле

Йулашки вăхăтра комсомол активĕн йышĕ нумай ӳсрĕ, йĕртсе пырас ĕçе ытларах çĕнĕ вăй хутшăнчĕ. Çак активпа куллен ĕçлесе пырсан, пуçламăш организацисен ĕçне кеске вăхăтрах нумай лайăхлатма пулать.

Анчах, комсомол райкомĕсем хальхи вăхăтра активпа пиртĕ йăпах ĕçлеççĕ-ха. Актив пухăвĕсемпе канашлăвĕсем хутран-ситрен çеç пулкалаççĕ. Çапла, октăбрĕн 14-мĕшĕнче ПСÇЛКС Трак райкомĕ комсомол активĕн районри пухуне иртернĕ. Пухăва палăртса хунă вăхăтран 4 сехет кайа йăлса ӳçнă пулин те, 130 çын вырăнне 43 çын çеç пухăннă. Урăхла пулма та пултарайман, мĕншĕн тесен комсомол райкомĕ ку пухăва йăнăшшĕн çеç, инкĕн хатĕрлемесĕр иртернĕ.

Актива ĕçе хутшăнтармалли ĕнтĕ Трак райкомĕнче 25 пуçламăш организаци çак çул хушшинче пĕр çамрака та комсомол ретне илмен, отчотпа суйлав пухăвĕсем самокритикăсар, пăçăлă иртеççĕ.

Елĕк районĕнче комсомол активĕн октăбĕр уйăхĕнче пулса иртне пухăвĕнче ПСÇЛКС райкомĕн членĕсем хăйсем те пит сахалăн пулнă. Унта та çавах, комсомол активне ĕçе ситĕлеклĕ йăваçгармаççĕ. Районри 32 колхозра пуçламăш организаци çук, 22 пуçламăш организаци кăçал пĕр çамрака та комсомол ретне илмен.

Шăхасан районĕнче комсомол активĕн пухăвĕ çулталăк хушшинче те икĕ хут çеç пулса иртнĕ. Комсомол райкомĕ комитет секретарĕсемпе, комсоргсемпе, уйрăмăнах вĕсен заместительĕсемпе çыхăну тытмасăр.

Комсомолăн Шупашкар хула комитечĕ те, ытти райкомсем те активпа ситĕлеклĕ ĕçлемеççĕ. Комсомол активĕн пухăвĕсемпе канашлăвĕсене пленӳмсен итогĕсене сӳтсе-явмала пулсан çеç пухаççĕ, ытти вăхăтра вара вĕсем çинчен манса кайаççĕ.

Пирĕн асрах тытмала: комсомолăн пуçламăш организацисен ĕçĕнче активпа пысăк выраăн йышăнса тăрать. Анчах ăна хăйне те вĕрентесе, пулăшса, йĕртсе пымала.

Пуçламăш организацисенче комитет секретарĕсен тата комсоргсен заместительĕсене йĕртсе пырас ĕçе сахал йăваçтараççĕ, час-часах вĕсем комитет секретарĕ йе комсорг чирлесен, урăх ĕçе кайсан ун выраăне йăлмали çынсем пекех пулса тăраççĕ. Ытти вăхăтра комитет секретарĕсем пĕтĕм ĕçе хăйсем туса пыма тăрăшаççĕ.

## Пулăшу кĕтекен организаци

Кирери механизацилеме вăрман пункчĕ çумĕнчи пуçламăш парторганизаци ăулашки вăхăтра партилĕ-политикăла ĕçе планлă те çук. Организациире 8 коммунис, вĕсене пĕрине те конкретлă ĕç паман. Агитатăрсемпе вулавçăсем çинчен парторг Сатанав ăулташ хăй те пĕлмест. Паллах, çакăн пек организацире ӳсĕм те çук. Кăçал пĕр çынна та парти ретне илмен. Ку организацине парти райкомĕн инструкторĕсем пырса та курмаççĕ.

# Райĕстăвком инструкторĕ

Çанталăк уйăр та лăпкă тăнă. Май уйăхĕ. Çуракăн хĕрулĕ кунĕсем. Колхозниксем хĕрсех тырă акиă, сураккне кĕске сурукра, пысăк пахалăхпа иртерессишĕн кĕрешнĕ.

Хумри Выçли йăлсовет председательĕ Краснов ăулташ та пайăн канцелярине йăланăхи пекех ирех пычĕ. Унăн пусĕнче пĕр шухăш: сураккне чи кĕске сурукра тата пысăк пахалăхпа иртерсе, районра малти рете тухасси. Сав хушăра телефон йăнăраса кайать.

Райĕстăвком председательĕ Тимофейĕв Краснова майăн 18-мĕшĕнче райĕстăвкома пыма чĕнчĕ.

Сак хыпара илтсен Краснов шухăша кайнă. Мĕн тума чĕнеççĕ-ши? Çуракăн пирки-ши? Çуракăн аван пырат... — шутлана Краснов ăулташ. Канцеляринче парма ăуратнаскер, ĕçсем мĕнле пынине палăлашма колхозниксем патне уйăх тухса утрĕ.

— Ака мĕншĕн чĕнне епĕр сана: Есĕ совет аппаратĕнче ĕçлеме пултарнине кура, сана епĕр Улатăр хулине райĕстăвком инструкторĕсен курсне вĕрнеме йăрас терĕмĕр. Унта есĕ 5 уйăх вĕренетĕн те пирĕн патна ĕçлеме килетĕн,—тесе йĕнтерĕ ăна райĕстăвком председательĕ Тимофейĕв ăулташ.

Ку ĕç 1938 çулти май уйăхĕнче пулса иртет. Майăн 20-мĕшĕнче Краснов курса вĕрнеме кайнать.

Краснов ăулташ райĕстăвком инструкторĕсен курсĕнчен „лайăх" паллăсем илнипе вĕренсе тухать. Çапла вара вăл çĕнтăвăрĕн 12-мĕшĕнче райĕстăвком инструкторĕнче ĕçлеме пуçлать.

Краснов райĕстăвком инструкторĕнче ĕçлеме пуçланăранпа нумай вăхăт иртмен пулсан та, унăн ĕçĕнче нумай паха тĕслĕхсем куратпăр.

Çĕнтăвăрĕн 20-мĕшĕнче райĕстăвком президиумĕ Краснова пысăк ĕç хушать. Хурамал йăлсоветне кайса, вăл йăлсовет. Ре ĕçсем мĕншĕн начар пынине тĕрĕслесе. ĕçсене вăйлатса йăмала.

Хурамал йăлсоветĕ пур ĕçсемпе те райĕстăвком ытти йăлсоветĕсенчен маца йăлса пынă. Йăлсовет председательĕ Дуткин, унччен председатель пулса ĕçленĕ Филиппăвăн сăтăра ĕçĕсене тĕрлетсе çитерес выраăне, вăл та çав çулпах пынă. Дуткин йăлсовет канцеляринче уйăхра 2—3 кунран ыта пулман. Ытти кунсене ĕçкĕне иртернĕ. Индивидуальниксене çăмăллăхсем паратăн тесе, вĕсем патĕнче ĕçсе çӳренĕ.

Дуткинăн массăна ĕçлес йăла начах та пулман, ĕçлеме те ăуратман. Колхозниксем ĕçлемен. Дуткин çекцисен ĕçĕсемпе интересленмен, вĕсене йĕртсе пыман. Ку çеç те мар. Дуткин çекци руководительĕсене те манса кайнă. Суйлавăçăсен наказĕсем сине çаврăнса та пăхман. Наказ тусан айĕнче выртнă.

Государствăн умĕнчи обязательствăсене пурăçласаи йăлса пынă. Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах ведениолиниксем хушшинче ĕç начар пынă.

Краснов ăулташ Хурамал йăлсоветне ситсенех активиссене пухать. Актив пухăвĕнче йăлсовет председательĕ Дуткинăн ĕçĕсене пăхса тухаççĕ.

Унăн ĕçне хытă тишкерĕççĕ, Дуткинăн ĕçри шăйăрăкĕсене пĕтĕмпех уçса палăртаççĕ. Дуткин малашне йăлсовет председательĕнче ĕçлеме тивĕçлĕ мар, тесе йышăнса хăварат актив пухăвĕ. Çапла вара çентăвăрĕн 23-мĕшĕнче Дуткина йăлсовет председательĕнчен кăлараççĕ. Ун вырăнне активиссенĕн лайăх ĕçлесе пыракан Малышĕв ăулташа суйласа лартаççĕ.

Краснов ăулташ çăкăнпах чăрăнса тăмасть. Çĕнĕ йăлсовет составне пухса лару иртерет. Унта вĕсем çекцисен ĕçĕсене йĕркелеçе йăрасси çинчен калаççĕ. Финсекци начар ĕçленине кура, унăн руководителĕне çĕнĕрен суйлаççĕ. Çăвăн пекех депутатсен группи те саланса кайнă пулнă. Ана та çĕнĕрен организацилеççĕ. Çĕнĕ председателĕне мĕнле ĕçлемели çинчен ситĕлĕкĕ кăтартусем парса хăваращĕ. Çăкăн хыççăн Краснов ăулташ райĕстăвкома тăрăнат.

Çĕнĕ инструктăра райĕстăвком президиумĕ йĕнчен кăтартусем, пулăшусем ситĕлеклĕ. Райĕстăвком председательĕ Тимофейĕв ăулташ Краснов ăулташăн ĕçĕсене тĕрĕслесех тăрат, ăна ĕçлеме вĕрентет, пана заданисене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслет.

Краснов ăулташ хăйне ĕçлеме йăтарласа план тунă. Иланах вăл çав план тăрăх ĕçлет, уйăхра 15 кун йăлсоветсенче пулса, йăлсовет председательĕсене мĕнле ĕçлемелине вĕрентет.

Краснов ПСК(б)П историн Кĕске курсне вĕренет. „Красная Чувашия" хаçата йĕркелĕ вуласа тăрат.

— Массăна ĕçлеме пĕлес тесен — вĕренни, тăрăшни кирлĕ. Çак ĕçре ПСК(б)П историн Кĕске курсĕ пысăк пулăшу парат, ăна вĕренмелех,—тет Краснов ăулташ.

ДМ. МИХАЙЛАВ,
ГЛ. МАРУШЕВ.
Йĕпреç.

## Пĕтĕ кĕсресене лайăх пăхар

Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн лабораторийĕ колхозсенче кĕсресем мĕншĕн хăм пăрахнине тĕрĕсленĕ тăрăх, кĕсресем хăма чир пирки мар, вĕсене пăхма пĕлмен пирки пăрахни палăрат.

Тĕрĕслеме килекен материалсем хушшинче сайра хутра çеç чирпе хăм пăрахни пулкалат. Кĕсресене начар пахалăхпа, çĕрĕ, шăнăа апатсем пани, синĕ тата таса мар шывпа шăварни выраăма пыршăра чикен чикекен тăват те хăм пăрахтарат.

Кĕсресемпе ытлашши йăвăр лавсем турттарни, хытă чуптарни, йăвăрт çавăрни, ӳкерни, чăрсăрăн тытколани хăм пăрахтарат.

Пĕтĕ кĕсресене таса, çутă винтере усрамала. Кĕсресене ытти лашасем тапасран уйăрăм усрамала. Вĕсем патĕнче йăнтрани пулмала мар. Йăнтрани пĕтĕ кĕсрен нерва системине тапратса хырăмне пăсма пултарат, çăвăн пек пулсан вăл хăм пăрахма та пултарат. Кĕсрене пĕтĕ чухне, уйăрăмăнах йăлашки уйăхсенче кулленех виçтават сехет хушши таса сывлăшра уçăлтарса çӳретмеле. Вĕсем çумне лашасене лайăх пăхма пĕлекен тата лаша пăхма йăратакан конюхсене çирĕплетмелле.

Кĕсресем хăм пăрахасси асăннă сăлтавсемсĕр пуçне тата тăхă амăшĕн органисăмне чир йĕрнине пулат. Тăхă амăшĕн органисăмĕ чирлесен, хăрăмри тăхăна та йĕрет, нумай чухне кĕсресен пăратнă йăтăлă группăри бактериесем йĕреççĕ. Чир кĕсрен ăунĕпе тăхă патне пырса чирлеттерет те хăм пăрахтарат.

Вăл чир хуçалăхра лашасене чир йĕрнĕ апатпа тата шывпа тăрантарса шăварсан темиçе кĕсренех хăм пăрахтарма пултарат. Çăвăнпа та ун пек апатсене кĕсресене çитерме йăрамасăр.

Кун пек чуна выльăхсене çăрăх витене куçармала, таса мар витене дезинфекци тумала. Кашни хăм пăрахнă кĕсрене ытти лашасенчен уйăрмала, витене, кĕрсе тăнă вырăна дезинфекци тумала.

Çак йĕркеесене пурнăçа кĕртсен-колхозсенче кĕсресем хăм сахал пăрахĕç. Пĕтĕленнĕ кĕсресенчен 100 процентĕнчĕс тăхă илмеле.

Л. И. Мокейĕв.
ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн лабораторин ветврачĕ.

# Халăх йурăçи

(Сулейман Стальский вилнĕренпе пĕр çулталăк çитнĕ тĕле)

Дагестан халăхĕн аслă поечĕ Сулейман Стальский вилни пĕр çулталăк тултарчĕ, вăл 1937 çулти нойабрĕн 23-мĕшĕнче Ашага-Стальăватлă хăйĕн тăван ауленче вилнĕ.

Вилес умĕн темиçе кун малăрах çеç ССРС Верховнăй Совечĕн сыйлавне асăнса çырнă хăйĕн ăулашки саввинче Сулейман çапла калана:

„Мильоны звонких голосов—
За Сталина!—единый зов.
Правдивых, искренних бойцов,
Орлов могучих выбирайте!"

Сулеймăнăн çак ăулашки сăмахĕсем пирĕн çĕршыври пур халăхсене те чĕнсе калана сăмахсем пулса тăраççĕ. Çак сăм ӳсемпе вăл хăйĕн чĕрĕри йăратăнне—социализăмăлă çĕршыва йăратăнне, партине, Аслă Сталина йăратăнне уçăмлăн кăтартса панă.

Сулейман Стальский—аслă тата простой çын тĕттĕм ăулра, хĕнхурăла, хăрушă тапхăрта çуралнă. Ашшĕ унăн чухăн çын пулнă. Сулейман хăйĕн ачалăхне выльăх витинче пурăнса иртернĕ, 13 çула çитсессĕнех киленчен йăт çĕре ĕç шырама тухса кайнă. Виçĕ çул хушши тарçăра пурăннă. Тăван ауле пĕр пус укçасăр тавăрăнă. Кӳршĕри пĕр кулак патĕнче ĕçлеме пуçланă. „Ытла та мăшкăлçке. тăванăмсем, хама тăрантмалăх хăм кӳршĕренех ĕç ыйтмашкăн"—тесе аса илнĕ вăл кайăрах.

Унтан агăнăнсен аллинче тăракан плантацисенче икĕ çул хушши ĕçлет, кунсемпе кăçсене выçăлан-туçăлăн иртерет, малари чирпе вăйлан чирлет. Сывалсанах тарат Сулейман: Самаркандра чукунçул тунă çĕрте, Бакура нефть кăларнă çĕрте те ĕçлет вăл. Унăн çамрăкăлăхĕ çавнашкал выçăлан, пĕр çĕрген тепĕр çĕре ĕç шыраса, çапкаланса çӳренипе иртнĕ.

Вăтăр çул иртсессен Сулейман каллех тăван аулне тавăрăнна. Хăйĕн аллипе хай пĕр печĕкçĕ пӳрт туса лартнă. Каллех кулаксем патĕнче тарçăра ĕçленĕ.

Пĕрремĕнче çапла вăл урамра халăх йурăçисене тĕл пулнă. Йурăçасем хĕвелрен тунсăкланнă шанчăк кайăк çинчен йурлана. Çавсене итленĕ хыççăн, килне çитсессĕнех Сулейман хăйĕн чи малтанхи йурринне хывна:

„... Влюблен без памяти в цветы,
Не замечаешь разве ты
Страданья муки нищеты,
И плач, и стоны, соловей?"

Халăх ăна часах ăнланнă, унăн тĕлĕнмеле талантне часах тупăнă. Сулеймăнăн йурринсене ăулри мĕнпур халăх, унтан пĕтĕм Дагестан халăхĕ йурлама пуçланă.

Чухăнлăхпа пуçмăрăх çинчен, йăлти чухăнсен вилем умĕнче тараканăн харушă пурнăçĕ çинчен, патшан ирсер чиновникĕсем çинчен, суйса пурăнаканăн мулласем çинчен, кулаксем çинчен—улăавла тĕнче, пуçмăр тĕнчи çинчен йурлана Сулейман.

Сулейман тарăху йурринсем çеç мар, халăхăн чи лăпăх ывăлĕсен шухăшесемпе килĕшсе вăл, пĕтĕм ĕçхалăхĕ кĕрешĕве чĕнекен йурăсем те уничухнех йурлана. Февральти революцинчен вăл ака мĕнле çырна:

„Пусть так. Но Сулейман поет:
Проснись трудящийся народ!
Нас время грозное зовет,—
Зовет, чтоб мы бойцами стали".

Октăбĕрти Социализăмăлă Аслă революци Сулейман пултарулăхне çĕнĕ вай кĕртсе нихçанхинех çуле хăпартрĕ. Унăн сасси тата хăватлăнрах йăнăрама пуçларĕ. Нумай мелйунăла пĕтĕм совет халăхĕшĕн вăл чи йăратнă поетсенчен пĕри пулса тăчĕ.

Хăй вăл вулама та çырма та пĕлмен. Çав вăхăтрах унăн ăсĕ пысăк, тавракурăмлăхĕ çав тери çăртса пулнă. Вăл виçĕ халăх чĕлхипе каласма пĕлнĕ: лезгинла, ӳркла, иранла. Хăй патне пыракан нумай ханасенчен Сулейман тĕрлĕ событисем çинчен, тĕнчери лару-тăру çинчен ыйта-ыйта пĕлнĕ. Мĕн илтнĕ хыпара, тĕрлĕ факт сене вăл ниçан та манман—çав тери танăл пулнă.

„ХХ-мĕш ĕмĕри Гомĕр"—çапла хаклана ăна Максим Горький. Çак „ХХ-мĕш ĕмĕрти Гомĕр" хăйĕн мĕнпур таланчне, вăйне коммунисăм ĕçĕшĕн, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн, халăх ĕçĕшĕн пана.

Унăн йурринсем, унăн çутă ĕмĕчĕсем совет халăхĕн пурнăçĕне таччăн çыхăнса тăраççĕ. Мĕнпур совет халăхĕне пĕрле Теďман, Ракоши ăулташсене, хăйсен ирĕккĕшĕн кĕрешекен Испани тата Китай халăхĕсене саламлать.

Октăбĕрти Аслă Революцин хыççăн Сулейман пĕтĕм совет халăхĕн йăрăçи пулса тăчĕ. Ку тĕлĕшпе вăл хай ака мĕн калат:

„Епĕ лезгин поечĕ мар,—совет поечĕ. Комсомол çинчен йурлатăп, комсомол Лезгинстанра çеç мар вĕт. Хĕрлĕ Çăр çинчен йурлатăп, Хĕрлĕ Çăран вăйĕ Самаркандра та, Мускавра та—пур çĕрте те пĕрех. Сталин çинчен йурлатăп епĕ,—Сталина пур халăх та пĕр пекех йăратаç, Сталин пур халăхăшăн та пĕр пекех тăрăшат. Пирĕн çĕршыва пĕрре, епĕр пурте пĕр çĕршывăн çыннисем".

Ленин тата Сталин образĕсем Стальскине хавхалантарнă. Ленина тата Сталина хисеп туса вăл хăйĕн чи лайăх йурринсене йурлана, çав йăрăсем чĕрери ăша кăмăлна, вери йăратуна тулса тăнă:

„Был Ленин первым, кто повел,
Кто вражьи гнезда в прах
размел,
Кто над землею, как орел,
Поднялся, став за бедных,
Рабочих всех об"единив,
Царя злодея низложив,
Ушел он, дело поручив
Тебе, великий Сталин!"

Сталин çинчен хунă йурринсем ун пĕтĕм халăх йурлакан йăрăсем пулса тăраççĕ:

„Живое двигая вперед,
Могучих партия ведет,
Шагает трудовой народ,
И ты их знамя, Сталин".

Халăхсен туслăхĕ çинчен çав тери лайăх йăрăсем çыратăп вăл, социализăмла çĕршыв çинчен, мухтавлă Хĕрлĕ Çăр çинчен çыратăп.

Халăхăн чăн-чăн ывăлĕ, халăхăн аслă йăрăçи—тăшмансене вăл, халăх ĕçне сутакансене, троцкислăхăринче ирсĕр бандитсене хăйĕн йурринсенче вут-кăварлă сăмахсемпе питлет, чунтан-чĕререн ылханат.

Сулейман Стальский халăха сыхлăхлă пулма, боļшевикла парти тавра, Аслă Сталин тавра çирĕпрехĕн пĕтĕçме чĕнсе йăрăçи шăрантарнă Халăх хăйĕн ылханлă тăшманĕсене, тĕрлĕ çĕлен-калтасене çĕр çийĕнчен тепĕ-тĕрĕпех кăкласа тасатассине вăл чĕререн шанă.

Çапла, Сулейман Стальский—аслă йăрăçа. Ашага-Стальăулри кĕлмĕç пӳртĕн Кремльри дворец патне çитиччен, кĕлмĕç тарçăран государствăлă деятеле патне çитиччен ӳсме пултарнă. Халăх ăна ССРС Верховнăй Совечĕн депутатне суйлама палăртнă пулнă. Ватă йăрăçа аслă совет çĕршывĕн ĕçĕсене йĕркелеес пыракан сталинла избрăшниксен ретĕнче пулма хатĕрленсе тăнă. Анчах суйлав кунĕчченех пурнăнаймăн вăл...

Сулейман Стальский вилни пĕр çулталăк тултарчĕ. Совет литературни чи çутă страницисенчен пĕрне туса хăварнă аслă савăçпа пĕтĕм совет халăхĕ мухтанат, ăна чĕрери йăратупа мăнаса сума сăвăт.

## Франципи компарти Тĕпкомĕн асламалă пленумĕ

Нойабĕрĕн 21-мĕшĕнче Франципи компарти Тĕпкомĕн асламалă пленумĕ уçăлнă.

Пленум президиумĕнче—Кашен, Торез, Дюкло, Андре Марти ăслатăшсем. Испаниран пыни интернационалла бригадисен бойцĕсĕсем Дюмон, Танги, Виттори т. ыт. тĕ.

Правительствăн чрезвычайлă декречĕсем тĕлĕшпе компарти мĕнле позици тытни çинчен Артур Раметт пысăк доклад тунă. Правительство хисепне илнĕ тăрăх, текĕ вăл, 1939 çулта государства расхучĕсем 137 мĕлйард франка çитессĕ, доходсем вара 80 мĕлйард франк çеç пулассĕ. Çак дефицита витес тесен, фашисма хирĕсле халăх фрончĕн программинче кăтартса хунă ĕçсене пурнăçа кĕртес пулать. Вăл ĕçсем мĕнле пулмали çинчен: „Пуйăнсене тулаттерес пулать", текен лозунг пурнăчĕн те ытларах уçăн каласа парать.

(ТАСС).

— o —

## Пĕтĕм тĕнчери шахмăт турнирĕ

Нойабĕрĕн 21-мĕшĕнче халиччен выльăса пĕтермен партисене выльăса пĕтернĕ.

Решевскипе Аљохин вăйăн çивчĕ, интереслĕ кĕрешӳпе вĕçленнĕ. Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен чемпионĕ Решевский ку вăйăра çентерме пултарнă. Анчах вăл вăйă вĕçенче йăнăшсем тунă. Аљохин, сав йăнăшсемпе усă курса, çур очко выльăса илнĕ.

Кересна Ботвинник, Капабланкапа Флор пĕрне пĕри çĕнтереймен.

Вуна тур выльăнă хыççăн малта Файн тата Керес пырассĕ, вĕсем 6,5-шер очко пухнă. Иккĕмĕш вырăнта—Ботвинник, унăн 5 очко тата выльăса пĕтермен пĕр парти. Аљохинпа Капабланкăн 5-шер очко. Решевскин 4 очко çура тата выльăса пĕтермен парти. Ейвен—3 очко çура, Флоран—3 очко.

(ТАСС).

— o —

## Китайри вăрçă

Китай çарĕсем халь те Кантон çинеле (Кантăр Китай) контрнаступлени туса пыраççĕ. Китай çарĕсен малти ударлă отрăчĕсем—Кантонран 3—4 километрта. Хула сывăхĕнчи Хуанша станци районĕнче хăйăр çапăсусем пыраççĕ. Китай артиллерийĕ Кантон çине персе тăрать. Йапонĕнсем хулара тата хула йĕртăнăра оборона укрепленийĕсем тăваççĕ.

Йулашки темиçе кун хушшинчи çапăçусенче Йапонии 4.000 салтакне вĕлернĕ тата 2.000 салтакне тытăна илнĕ. Китайĕнсем йапонĕнсенчен 200 пулемет, 6.000 артиллери снарйачĕсем тургта илнĕ.

Центр Китайра Йапони çарĕсем Хунаң провинцинче Чанша хули çинеле, Хубей провинцинче Саңйан хули çинеле наступлени туса пыраççĕ.

(ТАСС).

— o —

## Манчжурири Йапонийе хирĕçле пăлхав

Хайларта (Хĕвеланăç Манчжури) монгол çарĕсен 15.000 çынла дивизийĕ Йапони владăсене хирĕç пăлхав пуçланă. Пăлхав пуçланă салтаксем Йапонии темиçе офицерне вĕлернĕ тата нумай апатçимĕç запасĕсене, вăрçă хатĕрĕсене хăйсен аллине туртса илнĕ. Пăлхав çĕкленĕ салтаксем Китай партизанĕсемпе пĕрлешнĕ, йапонĕсене хирĕç çапăçăма тăма хатĕрленеççĕ.

(ТАСС).

— o —

## Англи пичечĕ Франципе Англи хушшинче пулмали каласусем çинчен

ЛОНДАН, нойабĕрĕн 20-мĕш. Халăхи вăхăтра Англири хаçат-журналсем Чемберленпа Галифакс хушшинче Парижра пулмалли каласусем çинчен пичечĕсем тĕлĕнмелле ытларах сăрасçĕ. Германипе йĕвĕрĕсĕне хирĕç погромсем тунипе, çакăн пирки Лондăнпа Берлин хушшинче каласусем пуласа иртни,—çаксем ĕнтĕ Чемберленăн „мир тăвас" политикине иккĕмĕш вырăна кусарса дăртрĕç, тесе сыраççĕ хаçат-журналсем. Халăхи-вăхăтри пĕтĕм тĕнчери обстановкăра Парижри каласусене пуринчен ытларах оборонăпа ыйтăвсем пулассĕ. анчах „Франципе Германи хушшинче сывăх вăхăтсенче килĕшӳ тăвасси-сене" шута илессĕ, тесе шутлассĕ.

Франципе Германи хушшинчи каласусем секретарĕ йĕркипе, Франципи Германири посолĕ пулнă Понсепе Гитлĕр уйăрăмлăх умĕн каласа хыççăн, пысăк пăлхав пуçланă хыççăн, пысăк пăлхав иртнине-çĕн.

## Гектартан 600 центнĕр виноград пухса илнĕ

Орджоникидзе йăнăпе тăракан колхоз (Самарканд районĕ, Узбек ССР) кăçал питĕ пысăк тухăçла виноград пухса илнĕ—гектартан 600 центнĕр пухнă.

„Декабрĕн 12-мĕш" колхоз та кăçал вăтамран кашни гектар çинчен 135-шер центнĕр виноград пухса илнĕ. Уйăрăм звеносем 400-шер центнĕр пухса илнĕ, план тăрăх 22 центнĕр паланртă пулнă. 1932 çултчен ку колхозсем гектар çинчен 4—5 центнĕртан ытлашши виноград пухса кĕртни нихăçан та пулман.

(ТАСС).

— o —

## Колхозсем 300 çĕнĕ çурт лартаççĕ

Новороссийск районĕнчи 7 колхозра çĕнĕрен 300 пуранмали çурт лартаççĕ. 162 çуртне туса пĕтерсе пуранма кусна та ĕнтĕ. Кашни çуртрах—столовай, сывăрмали пулĕмсем тата кухньă пур. Строительства 2.310 пин тенке лараť.

Килес çул районри 6 колхозра татах 250 çурт лартаççĕ.

(ТАСС).

— o —

## Çĕнĕ суртлă кантăр

Тутаркас районĕнчи „Колос" колхозри сŭс-кантăр акса тăвас йĕнĕпе ĕçлекен бригада выраћти кантăра акса тунипе пĕрлех, çĕнĕ суртлă кантăр акса ĕçтерес тĕлĕшпе ĕçлесе пырат. Кăçал çурхунне бригада опытлă участкăра 600 грам пусипе кантăрĕ пĕр вăхăтрах пулакан çĕнĕ суртлă кантăр вăрринче акна пулнă. Çĕнĕ суртлă кантăр пысăк тупăш панă. Сав лаптăкран икĕ пăт „кантăр вăрри тухнă, сŭсĕ те питĕ лайăх пулнă.

1939 çулта колхоз Атăл леш енне, темиçе çул хушши ферма выљăхĕсене усранă выранa, çĕнĕ суртлă кантăр участки тума палăртрĕ. Халĕ унта çĕр уйăрнă тата тислĕк сителĕкĕ хатĕрлеçе хунă. Ку йĕнĕпе ĕçлеме 6 çынтан уйăрăм бригада туни. Бригадăна 65 çулхи Бычков колхозник йĕртсе пырат.

ПР. ИАРКУНКИН.

## Шкулсенче истори вĕрентес ĕçе лайăхлатмала

ПСК(б)П Тăвай райкомĕне районри çутĕç пайĕ нойабĕрĕн 10—12-мĕшĕсенче районри туллимар вăтам шкулсенче тата Тăвай вăтам шкулĕнче истори вĕрентес ĕçе мĕнле йĕркеленине тĕрĕслесе тухрĕç. Шкулсене кайса, истори урокĕсенче пулса, истори вĕрентекенсен докладĕсене итлесе тĕрĕсленĕ хыççăн çакă куранче.

Тăвай вăтам шкулĕнчи асла классенче истори вĕрентекен Михайлăв йулташ уроксене хатĕрленмесĕр пырат. Нумай чухне заŋатисене вăл плансăр тата вĕренекенсене сыртарма программă тăрăх хатĕрленĕ конспектсăр иртерет. Аваллăхпа вăтам ĕмĕр историйĕсене вĕрентмели уроксенче йаланах историлĕ карттă йе физикăлă карттă пулмала. Кунта вăл карттăсене курма çук. Çавнашкалах истори учебникĕсем çукки те ĕçе питĕ йăвăрлатать. Учитĕлсен историне тĕрлĕ материалсем пухса, вĕсем тăрăх кашни урок валăçăн конспектсем тумала. Ку конспектсем тĕрĕс пулмала, вĕренекенсене вĕсенчен тĕрĕс çыртарса илтермелле. Тăвай шкулĕнче кĕçĕн класценче истори вĕрентекен Шихмачов йулташ та хăйĕн урокĕсене валăçăн конспектсем хатĕрлесе пымасть. Вĕренекенсен пуçĕнче вара йĕркесĕр, плансăр калаçуран нимĕн те тăрса йулмасть.

Тăвай вăтам шкулĕнчи историксем урок пĕтес умĕн урокра мĕн каланăни çинчен кĕске вывăдсем нихăçан та тумассĕç, вĕсем çапла урока вĕçлемесĕрех класран тухса кайаççĕ.

Тăвай вăтам шкулĕ 1938—39 вĕренӳ çулĕнче ĕçлеме вĕренӳпе пройзводствăна ĕç планĕ тунă. Плансăр, паллах, ĕç çинчен калаçма питĕ йывăр.

Географи урокĕнче йе ССР Союзĕн историне вĕрентнĕ чухне ачасене Октябĕрти Социалисăмлă революцин çĕнтерĕвĕсĕне, социализăмлă промышленнăçпа йалхуçалăхĕн питĕнĕвĕсене тăрăн та тĕплĕн çутатса памаля, социализăм строительстви пĕрмешне иккĕмĕш пилĕкçуллăхсенче мĕнле хăвăтлă утăмсемпе малала кайни çинчен каласа памала. Анчах Тăвай вăтам шкулĕнче ку ыйтусем ССРС историне географи предмечĕсенчен айăкра тăрса йулаççĕ.

Районра лайăх ĕçлекен историксем çук мар. Сăмахран, Чутей туллимар вăтам шкулсенчи асла классенче истори вĕрентес ĕçе Иамбашĕв йулташ тĕплĕн йĕркеленĕ. Вăл программă тăрăх урока хатĕрленнĕ чухне урок планĕ тата конспект тăвать, историлĕ материалсемпе литература хатĕрлеме тăрăшать. Ун урокĕсем чĕррĕн те туллин иртеççĕ. Урокра мĕн каланă çинчен кашни урок пĕтес умĕн вĕренекенсемпе кĕске вывăдсем тăвать. Вĕренекенсене кĕскен конспект та çыртарать.

Анчах çакăн пек тимлĕхпе ĕçлекен историксем районри шкулсенче сахалтарах-ха. Чылай историксем хăйсен пĕлĕвĕсем çителĕксĕррине аптăраççĕ. Хăйсен педагогикăла ăсталăхне, хăйсен пĕлĕвĕсен пуйăнлăхне ŭстерессишĕн, хăйсен тавракурăмĕсене анлăлатассишĕн историксем халĕ çителĕклĕ тарăн ĕçлесе пырайаççĕ.

ПСК(б)П Тĕпкомĕ пирĕн совет халăхне теорилĕ питĕ паха хăçпăшал — ПСК(б) Парти историн Кĕске курсне пачĕ. Шкулсенче истори вĕрентекен йулташсем çак хăçпăшала алла илессишĕн уйăрмах çине тăрса ĕçлемелле. Вĕсем болшевисăмпа çирĕп хăçпăшалланмала, унсăрăн шкулсенче истори вĕрентес ĕçе тивĕçлипе йĕркелеме çук.

М. Разномазăв.

## Пĕтĕм тĕнчери лару-тăру çинчен доклад

Иртнĕ кунсенче Шупашкарти Водопийăнăв йăнăпе тăракан тирсăран. сапăтнĕре рабочисен, инженерла-техникла работниксен тата служăщисчен пухăнĕ пулса иртнĕ. Вăл пухура Осоавиахим хула совечĕн председателĕ Кисеļов йулташ пĕтĕм тĕнчери лару-тăру тата оборонă ĕçĕн задачисем çинчен доклад туса панă. Доклад тăрăх пуху оборонă ĕçне вĕренес-сине вăйлатма йышăнса хăварнă.

Савăт коллективĕ ССРС Верховнăй Советне суйланă кун çуллахи тултарнă тĕле—декабрĕн 12-мĕш тĕлне 30 çынна оборонă значокĕсене илме вĕрентсе хатĕрлеме. Осоавиахим членĕсен йышне ŭстерме тата кашни уйăхрах тĕнчери лару-тăру çинчен лекцисем тата калаçусем туса иртерме йышăннă.

## Халăх сывлăхне сыхлас йенĕпе ĕçлекенсем

Кăçал Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕ пуљнипăсемне фелđшĕр пунчĕсенче тата ача йăслисенче ĕçлекенсен квалификацине ŭстерес тата çĕнĕ кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса иртернĕ.

Пайăнхи куна Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕ йенĕпе фелđшĕрсем—60, акушеркăсем—114, медсестрасем—100, ача йăслисенче ĕçлекен сестрасене—98 çын вĕрентсе хатĕрленĕ. Кусемсĕр пуçне вăхăтлăха уçнă йăслисенче ĕçлеме 483 сестра, трахработниксем 50 çын тĕрлĕ курссенчен вĕрентсе тухнă.

Нойабĕрĕн 23-мĕшĕнче пуљнисене фелđшĕр пункчĕсенче тата ача йăслисенче ĕçлекенсен квалификацине ŭстерес тата çĕнĕ кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса иртернĕ.

Пайăнхи куна Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕ йенĕпе фелđшĕрсем—60, акушеркăсем—114, медсестрасем—100, ача йăслисенче ĕçлекен сестрасене—98 çын вĕрентсе хатĕрленĕ. Кусемсĕр пуçне вăхăтлăха уçнă йăслисенче ĕçлеме 483 сестра, трахработниксем

Çавăн пекех, фелđшĕрсен квалификацине ŭстермели курсра 27 çын, лабораторисенчи техниксем—32 çын вĕреннĕ. Санитари инспекторĕсемпе уполномочĕннăйсен кĕске срукла курсĕсем урлă 400 çынна йăхăн вĕрентсе каларнă.

Халăхи вăхăтра акушеркăсен 6 уйăхлăх тата фелđшĕрсен пĕр çулталăклăх курсĕсем ĕçлеççĕ.

## Пăшал перекенсен ăмăртăвĕ

Иртнĕ кунсенче Шупашкарти стройтехникумра пăшал перекенсен ăмăртăвĕ пулса иртнĕ. Унта мĕн пурĕ 45 çын хутшăннă. Ăмăртăшăна 15 студент „Ворошиловский стрелок" значок норминне панă. Пăшаятан чи лайăх перекен 8 студента техникум дирекцийĕ премисем панă.

## Хĕлĕхлĕ оркестр

Шупашкарти типографинче ĕçлекен рабочисемпе служăщисем чылайăшĕ тĕрлĕрен музыка инструменчĕсемпе туйăннă. Халь музыка кружокĕ оркестр организацилесе нотăна лайăх вĕреннĕ. Вăл оркестр тĕрлĕ кĕвĕ-йурăсем вĕренсе хатĕрленет.

Ўкерчĕк çинче: Китай çарĕн бойецĕ малти постсенчен пĕринче заседора тăрать.

(Сойузфото).

## Çĕнĕ кĕнекесем

Çак кунсенче Воениздатра „Библиотека красноармейца" серийĕнче чылай кĕнекесем пичетленсе тухрĕç. Ку кĕнекесем красноармейĕсемшĕн кăна мар, пĕтĕм совет халăхĕшĕн, çамрăксемшĕн, комсомолĕсемшĕн питĕ паха, питĕ кирлĕ пулса тăрассĕ. Çак кĕнекесем совет халăхĕн героисĕмĕне хĕрӳлĕ патриотисĕмĕ çинчен каласа парассĕ.

Акă вăл кĕнекесем: М. Дубасăв „Трипольская трагедия", „Герои гражданской войны", С. Борисăв „Молодые патриоты", Хаджи-Мураг Мугуйĕв—„Комсомолец Танчи", В. Майаковский—„Оборонные стихи" тата И. Екслер „Герои Хасана".

„Трипольская трагедия"—автăрĕ хăй çак трагеди йышăнче пулнă, вăл тискер шурбандитсен аллинчен хăмăш йыще тапăнса ларса кăна хăтăлнă.

Çак повĕç комсомол историйĕнчен—вăл комсомолĕсем „совет влăçĕшĕн, пролетари çĕршывĕшĕн геройла вилĕмпе вилнисем çинчен каласа парать.

„Герои гражданской войны"—ку кĕнекере Чапайĕв, Щчорс, Ларзо, Котовский, Фабрициус, Пăрхоменко, Руднев, Дундич геройсем çинчен кĕскен, анчах вирлĕ тата тĕрĕс çырса пĕлтернĕ. Чапайĕв, Щчорс тата ытти çын примерĕсемпе пирĕн командирсем, красноармейĕсем хăвăланаççĕ.

„Герои Хасана"—ку кĕнеке нумай пулмасть пулса ирттнĕ событи-йи совет халăхĕн героисĕмĕ çинчен каласа парать.

„Молодые патриоты"—ку кĕнекере советсен çамрăк йăвĕ çинчен, унăн телейлĕ тата хавасла пурнăçне халăх тăшманĕсене хирĕç кĕрешсе туни çинчен çырнă.

„Комсомол Тан-Чи"—ку кĕнеке Китай халăхĕ Йапони империлисĕмне хирĕç вăрçинн уйăрăм епизочĕсем çинчен каласа парать.

Майаковскин „Оборонные стихи"—кунта поетăн ăн лайăх сăвăсенче пухса пичетленĕ.

Ив. Давыдăв.

— o —

## Шахмăт турнирĕ

Канашри финанс техникумĕнче шахмăт турнирĕ пулса иртнĕ. Турнирта III-мĕш курсра вĕренекен Н. Павлăв пĕрремĕш вырăн йышăннă. Вăл 11 партирен 9,6 очко выльăса илнĕ. Г. Андрейĕв.

— o —

*Суд*

## Çырусен марккисене хăйпăтнăшăн

Атликассинчи Е. Ф. Орлов Йĕтĕрнери почтă кантурĕнче ĕçлесе жуликла ĕçсем туса пуранă. Вăл хăй патне илсе йулнă çырусем çинчен марккисене хăйпăтса, вĕсене тепĕр хут сутса хăйне валăçă укçа тунă.

Октябрĕн 12-мĕшĕнче вăл почтă йешчĕкĕнчен çырусем каларса, вĕсен марккисене сŭсе илсе, çырусене чăмăркка туса Сăр шывне ывăтнă. Вăл çырусене кайран (40 çыру ытла пулнă) шыв кĕрринче тупнă. Çавăнпăн Орлова суда панă. Судра вăл хăйĕн аппине пĕтĕмпех йышăнă.

Йĕтĕрне районĕнчи халăх сучĕ Орлова çакăн пек хатланнăшăн икĕ çул хушши тĕрмене хупмала турĕ.

М. Йемельянăв.

— o —

## Таварсем çук

ЙĔТĔРНЕ. Пушнарти вăрман-промторг магазинĕ ĕçлекенсене кирлĕ таварсем çителĕкĕ тăратмасть. Йулашки вăхăтра магазинта конфет тата пируссăр пусне урăх таварсем çук. Çăкăр та йаланах пулмасть.

Магазин работникĕсене куллен кирлĕ таварсем, продуктăсем ылсе килме каласан, вĕсем ăл сулаçсĕ çеç, ĕçе тума тăрăшни курăнмасть.

В. Токарĕв.

— o —

## Тŭрлетни

„Чăваш Коммунĕ" хаçатăн ĕнерхи номĕрĕнче Шăмăршă районĕнчи кулакла саботаж çинчен çырнă статйăра йăлт патне тĕрĕс мар кăтартнă. Мăн Пуйанкасси вырăнне Йăрăслав тесе вулămала.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНĂВ.

Чăваш республикинчи пăрмансене сыхланкан тата пăртăн ўстерекен управленийĕн

çекретар-машинисткă, машинисткă

КИРЛĔ.

Адрес: Шупашкар-хули, Урицкий урамĕ, 30, кăсрен пайĕ.

2—1

Уполномоченный Чувашглавлита № 636.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Маркомиздрома СССР, заказ № 6262. Б. 04244 в. н.

## Çирĕп дисциплинă—коллективлă хуçалăхăн никĕсĕ

(Йалкорсен çырăвĕсем тăрăх)

Çирĕп дисциплинă—коллективлă ĕçре чи кирли пулса тăрат. Çавна пирĕн йаланах асра тытмала. Анчах пирĕн колхозсен правлени членĕсемпе бригадирсем колхозниксен массине ыра пример кăтартса пырас вырăнне, чылай чухне хăйсем дисциплинăна пăсаççĕ. Колхозсенчи хăшпĕр руководительсем, хăйсене пысăка хурса, рядовой колхозниксем пана сĕнŭсене хăлхана та чикесшĕн мар. Ун пек çынсем час-часах ĕçе колхозниксенчен кайа йуса тухаççĕ. колхозниксенчен малтан кайа кĕреççĕ. Тепĕр чухне колхозниксем хăйсен бригадирĕсене талăкĕпе те пĕрре курăймаççĕ. Кун пек руководительсенчен усси сахал ĕнтĕ.

Паллах, сăмах кунта колхозсенчи пур руководительсем çинчен те мар, анчах руководительсен пĕр пайĕ çинчен пырат.

Акă Пысăк Йенкассинчи „Трактор" (Вăрмар р.) колхозах илер. Ку колхозра удгă уйăх хушши колхозниксен пухăвĕ, суталăк хушшипе ревизи пулман. Правлени укçа-тенкĕпе мĕнле расхуйăса пынине, колхозăн пурăйăхне мĕнле тытса усранине, государствăй умĕнче тума тивĕçĕсене мĕнле туса тăнине членсем пачах пĕлмеççĕ.

Ишлей районĕнчи „Коминтерн" колхоз завхозĕ ĕçсене вăхăтра тума чăрмантарса пырат. Пукрав куне колхозниксем хĕрсех авăн çапнă. завхоз ĕçкĕре пулнине аласа тасатса хунă 500 пăт тыра икĕ талăк итем çинче вырттă. Сĕрулинне хума вырăн малтанах хатĕрлененнине, калăрпа хыççăн вун-вуник талăк хушши уйра вырттă.

Тури Йунтапа (Канаш р.) колхоз председателĕ Е. Константинăв колхозăнне 600 тенкĕ ытларах салатса йанă. Кунсăр пуçне, çметăна пăхнинчен ытлашши, хăй ирĕкĕпе çичĕ пин тенкĕ расхуйа йанă. Константинăвах ыйăлă уйăхĕнче Ф. Сидăрăв ведициннички туйи каймă колхоз ĕçлеме парса йанă. Вăл колхозра тăрĕ ĕçлекен колхозниксене час-часах лашипе пăхаççĕ.

Çакăн пек кирлĕ ĕçсене хăтланиннисене—тăшманла, сăтăрла ĕçсемпе пĕрех шутламала. Колхоз хуçалăхне йухăнтăракинсем çинчен çийĕнчех колхозниксем пĕрлешӳлĕ пухăвĕсенче сŭтсе-йăвас пулать. Колхозниксен интересĕсене хирĕç пыракансене валăçăн колхоз правленийĕнче вырăн пуçмала мар.

Йалхуçалăх ертелĕн сталинла уставĕ тăрăх, колхозсен пĕрлештерĕнĕ выльăхсен валăçăн çеç мар, колхозниксен хуçалăхĕсенчи выльăх-чĕрлĕхсен валăçăн те апат хатĕрлемеле. Пирĕн колхозсенче мĕнле-ха? Хăшпĕр колхозсенче пĕрлештерĕнĕ выльăх-чĕрлĕхсене хĕл касарма та кирлĕ тарван апат хатĕрлемеççĕ. Çав вăхăтрах ун пек колхозсенче çуллахи темĕн чухлĕ апат сĕрсе сала кайат. Йалкорсем çырса пĕлтернĕ тăрăх, пайăн кун та Хĕрлĕ Чутай р-чи Мăн Хăмарккă, Йедчей р-чи Кĕçĕн Тайапа, Ишлей р-чи „Шупуç" колхозĕсен итемĕсем çинче ыраш тата çуртри уйăлме, пучахсемпе арпасем, тырпулсем саналаса выртаççĕ. Тутаркас районĕнчи „Комбайн" колхозра пĕр уйăх хушшинче вуна капан утă ситерсе йанă. Камăн пурăйхĕ-ха ĕнтĕ вăл сапла сайа кайат? Вăл пурăйхăн вĕт колхозниксем çуталăкĕнче тăрăшса ĕçленĕ! Аçта кунта хуçасен куçĕсем?

Тукшикри „Париж Коммунĕ" (Тутаркас р.) колхоз председателĕ хăйсен колхозĕнчи ирĕкрĕхсем кусран сухалчăк тесе пулас, инкамран ыйтмасăрах йăлăма ĕçлеме тухса кайнă. Правленинне пĕр заседани Михайлăв йуаташ çеç тăрса йулнă.

Тăвай районĕнчи Тăрмăш колхозĕн завхозĕ Д. Казаков фермăри сыснасене икĕ талăк хушши апат памасăр тăратнă.

Çакăн пек ĕçсем пĕтĕмпех колхоз правленийĕнче ĕçлекенсем дисциплинăна çирĕп тытса пыманнинчен, йалхуçалăх ертĕм усравне пурнăçласа пыманнинчен килеççĕ.

Дисциплинăсăр коллективлă хуçалăх тытăнса тăма пултараймасть. Çавăнпăн ĕнтĕ, колхозăн дисциплинăйăн пĕтĕм колхозниксем кĕрешми кирлĕ. Районсенчи партине совет тата çĕрĕç организацисен руководительĕсем колхозсене ытларах туха çŭрени кирлĕ. Ĕçри ситменлĕхсене тŭрлетме колхозниксене вăхăтра пулăшу парса тăмала.